**Ыран – Нефть тата газ промышленноçĕнче ĕçлекенсен кунĕ**




# Пĕтĕмпех ял çыннисемшĕн, вĕсен ырлăхĕшĕн





***Сентябрĕн пĕрремĕш вырсарни кунĕнче, апла пулсан ыран, нефть тата газ промышленноçĕнче ĕçлекенсем хăйсен професси уявне паллă тăваççĕ. Районта вара газпа çыхăннă ĕçсене пурнăçлакан тĕп организаци вăл – “Чувашсетьгаз” уçă акционер обществин “Моргаушимежрайгаз” филиалĕ. Çулталăка яхăн ку предприятие Решит Халиуллович ЧЕБЕНОВ ертсе пырать. Уяв умĕн район хаçачĕн сотрудникĕ В. ШАПОШНИКОВ унпа тĕл пулнă, предприяти историйĕпе, паянхи ĕç-хĕлпе çыхăннă хăш-пĕр ыйтусем çине хуравлама ыйтнă.***

**– Решит Халиуллович, малтанах кăштах хăвăрпа паллаштарсамăр.**

– Эпĕ 1957 çулхи августăн 15-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Хирти Пикшик ялĕнче çуралнă. Анчах та Муркаш районĕ маншăн тăван район пекех тенĕ пулăттăм. Чăваш патшалăх ял хуçалăх институтне “Инженер-механик” специальноçпа вĕренсе пĕтернĕ. 1984 çулта “Передовик” хуçалăхра тĕп энергетикра ĕçлеме тытăннă. 4 çул хушши хуçалăхсем хушшинчи “Моргаушская” сторительство организацийĕнче тĕп механикра вăй хунă. Çапла вара районĕ те маншăн ют мар, газификаци ĕçĕ-хĕлне те сăмахпа мар, хамăн пурнăç опычĕпе пĕлсе тăратăп.

**– Паллă ĕнтĕ, паянхи пурнăçа эпир çут çанталăк газĕсĕр мĕнле пулассине шутлама та пултараймастпăр. Апла пулсан районта газ кĕртес ĕç мĕнле пулса пыни пирки каласа параймăр-ши?**

– Баллонсенчи газпа районта 1960 çулсенче тивĕçтерме тытăннă. 1991 çул тĕлне пĕтĕмпе 9852 газ баллонĕн установки шутланнă. Кашни хуçалăхрах баллонсене упрама складсем пулнă, газ баллонĕсемпе тивĕçтерессипе слесарь-газовиксем ĕçленĕ. Вĕсем газ баллонĕсене Çĕмĕрлери газонаполнительнăй станцирен илсе тăнă.

Муркашра çĕнĕрен тăвакан кирпĕч завочĕ валли “Чăвашагропромстрой” пĕрлешӳ 1972 çулхи октябрь уйăхĕнче районта газ парса тăракан автоматла пĕрремĕш станци (АГРС) туса ĕçе янă, 573 метр газ пăрăхĕсем хунă. Котельнăйпа кирпĕч хĕртмелли кăмакасем валли çут çанталăк газĕ парса тăма газ парса тăрассине йĕркелекен пункт (ГРП) ĕçе кĕртнĕ.

АГРС хута янă май районта газ кĕртес ĕçе анлăн туса пыма май килнĕ. Апла пулин те район, хуçалăхсемпе предприятисен ертӳçисем çак пĕлтерĕшлĕ ĕç çине кирлĕ пек тимлĕх уйăрманнипе 1983 çулччен урăх нимĕнле объекта та газ илсе пыман. Çав тапхăртан тытăнса кăна, 2 километра яхăн пысăк пусăмлă газ пăрăхне тата “Моргаушавтотехсервис” предприятин газ парса тăрассине йĕркелекен пунктне ĕçе янă май, Муркашра тата районти ытти ялсенче газификаци ĕçĕ сарăлса кайнă.

1985 çула районта газ кĕртес ĕç чи анлă сарăлнă тапхăр тесе палăртма пулать. Çав çул Муркашра пĕчĕк пусăмлă газ пăрăхĕсене 2218 метр, пысăк пусăмлисене 549 метр хурса хăварнă тата ĕçе кĕртнĕ. 1986 çулта 75 хваттерте çут çанталăк газĕ çунма тытăннă.

Ырă улшăнусем курăмлă пулнă. 1992 çул тĕлне районта 133,3 километр газ пăрăхĕсем ĕçе кĕртнĕ, 28 ГРП тата ГРУ туса лартнă, 160 хваттере, 612 уйрăм çурта, 4 промышленность предприятине, хуçалăхсен 8 котельнăйне “кăвак çулăм” çитнĕ. Укçа-тенкĕ тĕлĕшпе çирĕп хуçалăхсем газификаци ĕçĕсене хăйсен вăйĕпе сахал мар туса ирттернĕ. Кунта “Герой”, Суворов яч. хис., “Свобода” хуçалăхсен ертӳçисене А.Н. Иванова, В.Б. Трофимова, К.Е. Сретинские асăнса хăвармалла. “Гигант”, “Оринино”, “Хлебороб” тата ытти хуçалăхсен территорийĕсенче вара уйрăм çынсенчен укçа пуçтарса та пулин газ кĕртес ĕçсене туса ирттернĕ.

Газ хуçалăхĕн районти



службы пулманни газ кĕртессипе çыхăннă нумай ыйтусене оперативлă татса пама май паман. Çавна шута илсе тата райĕçтăвком ыйтăвне тивĕçтерсе “Чувашгаз” производство пĕрлешĕвĕн М.И. Рассказчиковăн 1991 çулхи хушăвĕпе газ хуçалăхĕн районти службине туса хунă, вăл “Ядринмежрайгазран” уйрăлса хăй тĕллĕн ĕçлеме тытăннă. Çапла вара çултан çул предприяти аталанса, çирĕпленсе пынă.

**– Решит Халиуллович, уяв умĕн районта газ кĕртессипе çине тăрса ĕçленисенчен камсене асăннă пулăттăр?**

– Каласа хăвармалла, малтанхи вăхăтра районта газ кĕртессипе кирлĕ пек ĕçлесе пыма кадрсем те, газ оборудованийĕсемпе пăрăхсем те çитмен. Çавна май ытларах ĕçе хуçалăхсен хăйсем çине илме тивнĕ. “Дружба”, Е. Андреев яч. хис., “Ударник” , ун чухнехи “За коммунизм” хуçалăхсем газ енĕпе ĕçлекен специалистсене хăйсен вăйĕпе вĕрентсе хатĕрленĕ. Пăрăхсем тата ытти оборудованисем туянма вĕсене туса кăларакан предприятисене вырăна тухса çӳреме тивнĕ. Халĕ те район çыннисем çав вăхăтра райĕçтăвком председателĕн çумĕ пулса ĕçленĕ В.В. Мефодьева, капиталлă строительство пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Г.П. Мазикова, ку ĕçе нумай тӳпе хывнă ытти ертӳçĕсемпе специалистсене ырăпа асăнаççĕ.

**– Хальхи вăхăтра районта газ кĕртессипе лару-тăру еплерех-ха?**

– Районта газ кĕртсе пĕтернĕ темелле. Урăхла каласан, кашни ялах çут çанталăк газне илсе çитернĕ. Уйрăм ялсенче камсен укçа-тенкĕ çитменнипе е урăх сăлтавсемпе газ кĕртменнисем кăна юлнă. Районĕпе çĕр çийĕн каякан газ пăрăхĕсем 900 километра яхăн вăрăмĕш. Вĕсене пĕтĕмпех пăхса тăратпăр. Кунсăр пуçне юлашки вăхăтра нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакан çынсен хваттерĕсене хутса ăшăтма газ кĕртсе парса хурансем вырнаçтарассипе ĕçлетпĕр. Заявкăсем сахал мар.

**– Нумаях пулмасть сирĕн предприяти ячĕ улшăнчĕ. Эпир хăнăхнă “Моргаушрайгаз” вырăнне “Моргаушимежрайгаз” теме тытăнчĕç ăна. Ку улшăну мĕнпе çыхăннă тата мĕне пĕлтерет-ха вăл?**

– Ку вăл предприяти пысăкланнипе, кашни районтах централизациленĕ предприятисем тытса тăнипе каякан тăкаксене чакарассипе çыхăннă. “Чувашсетьгаз” уçă акционер обществин “Моргаушимежрайгаз” филиалне халĕ пирĕн Муркаш районĕсĕр пуçне Етĕрне хулипе районĕ, Хĕрлĕ Чутай районсем кĕреççĕ. Мĕншĕн тĕп филиала Муркашра (тĕрĕсрех каласан, Лантăшра) суйласа илнĕ тесе ыйтас пулсан, çавна калама пулать. Мĕншĕн тесен пирĕн филиал географи тĕлĕшĕнчен юрăхлă вырăнта вырнаçнă, пурлăхпа техника бази те чухăн мар.

Çапла вара Етĕрнере тата Хĕрлĕ Чутайра филиалсене пĕтернĕ, вĕсенче газ хуçалăхĕн участокĕсене хăварнă. Ку участоксене Н.Ф. Денисенко тата И.М. Алексеев ертсе пыраççĕ. Вĕсем Муркашри филиала пăхăнса тăраççĕ. Халĕ пĕтĕмĕшле пирĕн филиал çĕр çийĕн каякан газ пăрăхĕсене 2009,62 километр, çĕр айĕн каяканнисене 1500 километр ытла пăхса тăрать.

Предприятире талăкĕпех ĕçлекен служба вăл – аварипе диспетчер службы. Унта 1 диспетчер, 1 водитель-слесарь тата слесарь. Тĕрлĕрен аварисем е кăлтăксем пирки информаци пире пăхăнса тăракан районсенчен те кунта килет, кайран вара пирĕн патран “Чувашсетьгаза” ăсатăнать.

Хальхи вăхăтра автомашинăсене газпа ĕçлеме майлаштаракансем сахал мар. Ку вăл экологи тĕлĕшпе те аван, çитменнине топливо валли каякан укçа-тенкĕне сахал мар перекетлеме май парать. Çавна шута илсе Лантăшра автомашинăсене газпа заправка тăвакан станци уçнă. Куллен кунта 15 пин литра яхăн газпа заправка тăваççĕ.

Çавна та каласа хăварас килет. Нумаях пулмасть пирĕн патра Газпром, Газпромрегионгаз тата Газнадзор представителĕсем тĕрĕслевре пулчĕç, газ хуçалăхĕн ĕçĕ-хĕлне тĕрĕслерĕç. Ку вăл хĕллехи хутса ăшăтмалли тапхăра епле хатĕрленнипе çыхăннă. Каласа хăварас пулать, комисси пирĕн ĕçсемпе кăмăллă юлчĕ.

**– Решит Халиуллович, уяв умĕн камсене ятранах асăнса хăварас тетĕр?**

– Штатра пĕтĕмпе 194 çын шутланать. Тĕрĕссипе пурте вĕсем пĕр ĕçпех çыхăннă май пĕтĕмĕшле ĕç кăтартăвĕсем те кашнинченех килеççĕ. Муркаш участокĕпе илес пулсан, М.Е. Николаевпа В.Г. Петров сварщиксене палăртас килет. Вĕсем юсавпа строительство тата монтаж участокĕн членĕсем. Хушнă ĕçшĕн ответлăха çирĕп туяççĕ. Участокри газ пăрăхĕсене пăхса тăрассишĕн О.В. Лоцманов бригади ответлă пулса тăрать. Вĕсемех газпа тивĕçтерессине йĕркелесе тăракан пунктсене те тĕрĕслесе тăраççĕ. А.А. Никоноров мастер ертсе пыракан бригада ялсенчи уйрăм çынсен пурăнмалли çурчĕсенчи газ оборудованийĕсен юсавлăхĕшĕн ответлă. Вĕсем тата ку бригадăсен членĕсем пирки чи ăшă сăмахсем кăна калама пултаратăп.

**– Юлашкинчен тата мĕн калас кăмăл пур?**

– Çитсе килекен професси уявĕ ячĕпе газ хуçалăхĕн мĕн пур ĕçченĕсене, ветерансене чун-чĕререн саламлатăп, ăнăçусем, ырлăх-сывлăх сунатăп. Ĕçĕрсем ăнса пыччăр, çемйĕрсенче килĕшӳпе çураçу, ăнлану хуçаланччăр.

**Сăн ӳкерчĕкре: автомашинăсене газпа заправка тăвакан станцире.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**Çамрăклăх**

## Суворов училищин курсанчĕ



Юлашки вăхăтра çамрăксем çар службинчен пăрăнасси пирки сахал мар калаçаççĕ. Апла пулин те мал туртăмлă, пултаруллă яшсем хушшинче çар службине хăйсен кулленхи пурнăç йĕрки шутне кĕртес шутлисем çук мар. Акă, Андрей Царев Москакасси шкулĕнче вĕреннĕ. 8 класс пĕтернĕ хыççăн вăл Хусанти Суворов училищине вĕренме кĕме кăмăл тунă. Халĕ вăл – ку училище курсанчĕ.

– Çăмăл пулмарĕ вĕренме кĕме,– каласа парать вăл.– Чăваш Республикинчен пĕтĕмпе вĕренме кĕме 34 çамрăк заявлени панăччĕ. Вĕсенчен 4-шĕ кăна экзаменсене ăнăçлă тытса тата конкурс витĕр тухса вĕренме кĕме пултарчĕç. Вĕсенчен пĕри эпĕ пулса тăтăм.

Сăмах май, çар училищисене каякансем татах çук мар. Ивановка ялĕнчи Сергей Кириллов, акă, офицер пулас ĕмĕте пурнăçлама аслă çар училищине вĕренме кĕнĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Андрей Царев хăйĕн юратнă вĕрентекенĕпе О.И. Тарасовпа.**

**Вĕрентӳ системин реформи**

## Анлă педсовет

Августăн 24-мĕшĕнче республикăри педагогсем йăлана кĕнĕ анлă педсовета – “Вĕрентӳ ĕçĕнчи наци проекчĕ Чăваш Республикинчи вĕрентӳ ĕçĕн пахалăхне тата конкурентлăхне ӳстермелли мел” ятпа ирттерекен конференцие пухăннă.

Конференци ĕçне Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров, вĕрентĕвĕн федераллă агентствин ертӳçи О. Волжина, республика ректорсен канашĕн председателĕ Л. Кураков, попечительсен республикăри канашĕн председателĕ В. Александров, ЧР Патшалăх Канашĕн председателĕ М. Михайловский хутшăннă.

ЧР вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Г. Чернова доклад туса панă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче вĕрентӳ енĕпе йышăннă приоритетлă наци проектне пурнăçа кĕртессипе çыхăннă ыйтусене хускатнă.

Июнь уйăхĕнче инноваци вĕрентӳ программисене пурнăçа кĕртекен вĕрентӳ учрежденийĕсен конкурсĕ вĕçленнĕ. Ку конкурса республикăри 200 ытла шкул хутшăннă. Çĕнтерӳçĕ-шкулсене Николай Васильевич Федоров Раççей Вĕрентӳ тата наука министерствин Хисеп грамотисене панă. РФ патшалăх наградине 33 шкул тивĕçнĕ. Конкурсра çĕнтерсе вĕсем 1-шер миллион тенкĕ грант илнĕ. 20 шкул вара 200 пин тенкĕлĕх грант хуçисем пулса тăнă, ЧР Президенчĕн дипломĕсене илнĕ.

Вĕрентĕвĕн федераллă агентствин ертӳçин çумĕ Ольга Волжина хăйĕн сăмахĕнче “Вĕрентӳ” наци проектне пурнăçа кĕртессишĕн ответлă пулса тăракансем тĕлĕшпе ырă сăмахсем сахал мар каланă. “Проект вĕрентӳ ĕçне çĕнĕ шая çĕклеме майсем туса парать, çĕнĕ информаци педагогĕсене хатĕрлеме, инноваци технологийĕсене пурнăçа кĕртме, вĕрентĕве кашниншĕн усă курма юрăхлă тума май парать”,– тенĕ вăл.

Республика Президенчĕ Николай Федоров вĕрентӳ ĕçĕ çине малашне те пысăк тимлĕх уйăрасси, пĕтĕмĕшле наци прогрессне аталантарасси пирки пĕлтернĕ. Вăл çапла шантарнă. 2007 çулта республикăри пур шкулта та компьютерсем пулĕç. Кунсăр пуçне “Вĕрентӳ” проектне пурнăçа кĕртнĕ май республикăри 543 шкул икĕ çул хушши пысăк хăвăртлăхлă тата тӳлевсĕр Интернетпа усă курма пултарĕç. 329 учреждени 2006 çул вĕçлениччenех ку çăмăллăхпа усă курма тытăнĕç, ытти 214 шкул – 2007 çулта. Халех ĕнтĕ Вĕрентӳ министерствинче шкулсенче интерактивлă доскапа усă курасси пирки шутлаççĕ.

– Хальхи вăхăтра лайăх шкулсем нумай, çавăнпа та вĕрентӳ ĕçĕнче ырă улшăнусем пуласса шанма пулать,– палăртнă Президент.

**Татьяна ФИЛИППОВА, “Вĕрентӳ системин реформи” проектăн пресс-секретарĕ.**